26-мĕш çул тухать: Хакĕ 20 пус.

1943
ДЕКАБРЬ
5
ЫРСАРНИКУН
240(6477) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Сталинла Конституци ялавĕпе

Паян — Сталинла Конституци кунĕ. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Конституцине тивĕçлипех халăхсен ытти ăн кĕнеки тесе ят панă. Çав аслă кĕнекене пирĕн çĕршыври халăхсен пĕтĕм тĕнчипе палăрса тăракан историллĕ çĕнтерĕвĕсене çырса хунă. Çав аслă кĕнекере пирĕн государствăн никама пăхăнманлăхĕ, пирĕн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕ, чапĕпе мухтавĕ, унăн чи аслă демократизмĕ, совет çĕршывĕнчи халăхсен иксĕлми туслăхĕ, рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин тăванла союзĕ, совет гражданинĕн ирĕклĕ те телейлĕ, хаваслă та савăнăçлă пурăнмалли, ĕçлемелли, вĕренмелли прависем пĕтĕçсе тăраççĕ.

Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче пурăнакан совет халăхĕн пултаруллă та хĕрÿллĕ ĕçне ирсĕр нимĕç вăрă-хурахĕсем вăрçăпа килсе пăсрĕç. Çынçиен Гитлерăн урнă йыттисем пирĕн юнпа тар юхтарса тунă çĕнтерÿсене — сталинла пилĕкçуллăхсем вăхатĕнче туса лартнă тĕлĕнмелле фабрикăсемпе заводсене, пирĕн хĕвелпе тулнă культура дворецĕсене, шкулсемпе больницăсене, пирĕн халăх ĕмĕртен пухса пынă культура пуянлăхĕсене, пирĕн уйхирсенчи чаплă тракторсемпе комбайнсене, машинăсене аркатса, çаратса пĕтерме шут тытнă. Çав ирсĕр вăрă-хурахсем пирĕн ирĕклĕ совет çыннисене — пĕр пайне вĕлерсе пĕтерме, тепĕр пайне — хăйсен чурисем туса хума хапсăннă.

Анчах нимĕçсен фашистла захватчикĕсем йăнăшрĕç. Гитлерăн çаратуçă-çарĕ Совет Союзĕнчи халăхсен гранит хÿме пек иксĕлми çирĕплĕхĕ çине пырса тăрăнчĕ. Совет влаçĕ панă ирĕклĕхе, Сталинла Конституци панă правăсене, тăван çĕршывăн пуянлăхĕсене сĕмсĕр тăшманран хÿтĕлеме совет халăхĕн çителĕклĕ таранах вăйхăват тупăнчĕ.

Тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕпе чыслăхне хÿтĕлеме совет халăхĕн çапăçусенче пиçĕхсе çитĕннĕ хăватлă Хĕрлĕ Çар пур. Хĕрлĕ Çарăн соединенийĕсемпе чаçĕсене Сталин юлташ пăхса çитĕнтерне генералсемпе офицерсем çапăçура ертсе пыраççĕ.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара пĕтĕм халăх ывăнма пĕлмесĕр пулăшса тăрать. Тăван çĕршыв вăйĕн, çăлкуçĕ пĕр хухмасăр, пĕр чакмасăр хăватлăн тапса тăрать. Совет Союз вăйĕн çăлкуçĕ — пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕнче, рабочисемпе хресченсен тата совет интеллигенцийĕн моралльĕ-политикăллă пĕрлĕхĕнче, пирĕн пĕтĕм халăха, пĕтĕм ĕçе большевиксен партийĕ, Сталин юлташ ертсе пынинче, совет стройĕпе совет государстви иксĕлми çирĕп пулнинче.

Хамăр вăй-хăватăн çак аслă çăлкуçĕсене пире Октябрьти социализмлă аслă революци уçса пачĕ. Çав аслă çăлкуçĕсем Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче татах та ытларах вăй илсе хăватланчĕç.

Пирĕн çĕршывăн Сталинла Конституцире çырса хунă историллĕ çĕнтерĕвĕсем Хĕрлĕ Çар паянхи çапăçу хирĕнче тăвакан çĕнтерÿсен никĕсĕ пулса тăрать. Çав çĕнтерÿсен тĕп никĕсне пирĕн халăх сталинла пятилеткăсен çулĕсенче, колхоз строительствин çулĕсенче хывнă, халĕ вăл çав никĕсе малалла ÿстерсе çирĕплетсе пырать.

Пĕтĕм халăх пулăшса тăракан Хĕрлĕ Çар нимĕçсен вăрă-хурахла çарне хаяррăн аркатса малалла пырать, совет çĕрне фашистла ирсĕрсенчен тимĕр шăпăрпа шăлса тасатать. Иртнĕ çул Сталинла Конституци кунне уявланăранпа пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕçсен 300 пинлĕ çарне Сталинград патĕнче çавăрса илсе пĕтерсе тăкрĕ, малалла тапăнса пырса Донпа Кубань тăрăхĕсене ирĕке кăларчĕ. Унтан Хĕрлĕ Çар нимĕçсен çуллахи наступленине пĕтерсе лартса, хăй хăватлă наступлени пуçласа ячĕ те совет хулисемпе ялĕсене пиншерĕн ирĕке кăларчĕ, промышленноçпа ялхуçалăхĕн пысăк центрĕсемпе районĕсене ылханлă тăшманран туртса илсе тăван çĕршыва тавăрса пачĕ.

Тăван çĕршывшăн, унăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн, Сталинла Конституцишĕн пыракан çапăçусенче мĕнпур Хĕрлĕ Çар воинĕсемпе пĕрле пирĕн чăваш халăхĕн ывăлĕсем те пысăк хастарлăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ. Вĕсем орденлă республикăн чысне çÿлте тытаççĕ. Паттăррисенчен те паттăррисем — Федот Орлов, Мирон Ефимов, Борис Васильев, Павел Лаптев, Геннадий Габайдулин, Семен Коновалов, Иван Поляков, Александр Сидорин çак вăрçăра Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Çапăçу хирĕнчи паттăр ĕçсемшĕн пирĕн мухтавлă земляксене 4500 çынна ытла правительство орденсемпе медальсем парса награддăланă.

Хăйĕн фронтри ывăлĕсене пирĕн чăваш халăхĕ те, ытти мĕнпур тăванла халăхсем пекех, фабрикăсемпе заводсенче, колхоз уйхирĕнче вăя шеллемесĕр ĕçлесе пулăшса тăрать.

Аслă çулпуç Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă хăйĕн докладĕнче фронта татах та ытларах пулăшма чĕннине ответлесе, республикăри колхозсенче çĕнĕ юхăм — государствăна тырă сутасси сарăлса кайрĕ. Тăван çĕршывăн çуламлă патриочĕсем çĕнтерÿшĕн нимĕн те хĕрхенсе тăмаççĕ. Колхозсемпе колхозниксем государствăна ĕнтĕ темиçе миллион пăт тырă сутрĕç. Партипе совет организацийĕсен тивĕçĕ çак патриотла ĕçе малалла сарса пырасси, сутнă тырра государство склачĕсене хăвăртрах леçсе памалла тăвасси пулса тăрать.

Пирĕн совет çыннисем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса, мухтанса ларма вĕренмен. Тăшмана хăвăртрах çапса аркатас тесен, совет çĕршывĕн пур хулисемпе ялĕсем çинче те Сталинла Конституци ялавĕ хăвăртрах ялкăшма тытăнтăр тесен, пирĕн татах та ытларах вăй хурса кĕрешмелле, ĕçлемелле.

Аслă çулпуç, пирĕн Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пыракан Хĕрлĕ Çар нимĕçсен вăрă-хурахла çарне çапса аркатать, совет çĕрне фашистла ирсĕрсенчен тасатса çитерет. Çав вăхăт çывхарса килет. Мĕнпур совет хулисемпе ялĕсемшĕн, мĕнпур совет çыннисемшĕн, вăхăтлăха нимĕç чуралăхĕнче асапланакансемшĕн, часах акă Сталинла Конституци хĕвелĕ — çĕнтерÿ хĕвелĕ суталса тухĕ.

ГОСУДАРСТВĂНА—ТЫРĂ

СТАЛИНЛА КОНСТИТУЦИ КУНĔ ЯЧĔПЕ

КУСЛАВККА, декабрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозниксемпе колхозницăсем государствăна сутнă тырра хăвăртрах хатĕрлев пунктне леçсе пама тăрăшаççĕ. Паянхи куна районĕпе государствăна 59.000 пăт тырă сутнă, хатĕрлев пунктне 32.000 пăт леçсе панă. Сталинла Конституци кунне колхоз членĕсем государствăна сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçсе панипе кĕтсе илеççĕ. «Коммунар», «Заря», «Путь Маркса», «Большевик», Сталин ячĕпе тăракан, «Канаш», «Правда», «Путь к социализму», «Красное знамя», «Путь Ленина» колхозсем сутнă тырра декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне хатĕрлев пунктне леçсе пĕтереççĕ.

Г. КРЮЧКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Уяв ячĕпе хĕрлĕ обозсем

ШАХАСАН декабрĕн 4-мĕшĕ (Телефонпа). Районри колхоз членĕсем Сталинла Конституци кунне хатĕрлев пунктне нумай лавлă хĕрлĕ обозсем янипе кĕтсе илеççĕ. Çак икĕ кун хушшинче хатĕрлев пунктне тырă тиенĕ лавсем вĕçĕ-хĕррисĕр килсе тăчĕç. «Активист», «Ударник», «Победа», «Парижская Коммуна», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçсе пĕтерчĕç. Районĕпе государствăна 157 пин пăт тырă сутнă, хатĕрлев пунктне 73 пин пăт леçнĕ. Ку ĕç ытти колхозсенче те йĕркеллĕн пулса пырать. Сутнă тырра хатĕрлев пунктне леçес ĕçе Конституци кунĕ тĕлне тата темиçе вунă колхоз вĕçлет.

М. КУЗЬМИН.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ

ТАВАЙ. Паян колхозсенче государствăна сутнă тырра Сталинла Конституци кунĕ ячĕпе хатĕрлев пунктне леçес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ пулса иртет. Декабрĕн 4-мĕшĕнче «Красная Чувашия», «1-ое мая», «Пламя», «Новый путь», Смидович ячĕпе тăракан колхозсем сутнă тырра пĕтĕмĕшпех хатĕрлев пунктне леçсе пачĕç. Паянхи кунччен районĕпе государствăна 105.500 пăт тырă сутнă, хатĕрлев пунктне 88.745 пăт леçнĕ. Колхоз членĕсем паянхи воскресникре ку ĕçе вĕçлеме пулаççĕ.

А. МОЛОСТВОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Колхозниксен патриотла ĕçĕсем

Синерти (Элĕк районĕ). Жданов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пур ĕçре те фронтри боецсемпе танлашма тăрăшаççĕ. Кăçал вĕсем, хăйсен уйхирĕнче вăя шеллемесĕр ĕçлесе, тырпула кĕске срокра пуçтарса кĕртрĕç, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерчĕç, октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне вара пур обязательствăсене те ытлашшипех парса татрĕç. 1944-мĕш çулшăн натуроплата шучĕпе 31 центнер тырă пачĕç, аш-какай 1944-мĕш çулшăн пĕтĕмпех парса татрĕç тата 1945-мĕш çулшăн та 13 центнер пачĕç. Çавăн пекех тата çитес çулшăн сĕт, çăмарта чылай пачĕç.

Анчах хăйсен ĕçне колхозниксем çителĕклĕ тесе шутламаççĕ. «Ытларах пулăшмалла пирĕн фронта», теççĕ вĕсем. Çулпуç доклачĕпе приказне сÿтсе-явнă хыççăн çак колхоз членĕсем, пĕр çын пек пулса, хăйсен запасĕнчен тата обществăллă фондран государствăна 1.470 пăт тырă сутма кăмăл турĕç.

— Çĕршыва тырă кирлĕ, ăна эпир çителĕклĕ пама пултаратпăр, — терĕ çак кунсенче пулса иртнĕ пухура колхоз счетовочĕ Иван Петриков. Вăл çавăнтах хăй ĕçлесе илнĕ тырăран 25 пăтне государствăна сутма кăмăл турĕ. Иртнĕ çулта та Петриков юлташ оборона фондне 25 пăт тырă, 21 килограмм пыл панăччĕ.

Колхозра çакăн пек патриотсем сахал мар. Сысна пăхакан Дария Золотова, акă, юлашки çулталăк хушшинче тăрăшса ĕçленипе, 16 сысна аминчен 203 çăвăр илчĕ, пурне те тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстерет. Халĕ, çĕршыва тырă кирлĕ чухне, вăл хăйĕн запасĕнчен 8 пăт тата кăçал ĕçлесе тунă кашни ĕçкунĕ пуçне тивекен тырăран 200-шер грамм сутрĕ.

Жданов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем халь государствăна сутнă тырра васкасах хатĕрлев пункчĕсене леçеççĕ.

Х. ЛИСИН.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитетĕнчен тата ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕпе ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ партие тата мĕнпур ĕçсыннисене — декабрĕн 4-мĕшĕнче 4 сехет те 32 минутăра, Мускавра, чылай вăхăт хушши чирлесе выртнă хыççăн, большевиксен партийĕн чи ватă деятелĕ, парти идейисен çуламлă пропагандисчĕ, ĕçсыннисен ĕçĕшĕн хăйĕн вăйне хĕрхенмесĕр кĕрешекенскер, ВКП(б) Центральный Комитечĕн членĕ, ССР Союзĕн Верховный Совет депутачĕ ЕМЕЛЬЯН ЯРОСЛАВСКИЙ юлташ вилни çинчен тарăнăн хурланса пĕлтереççĕ.

Хăйĕн пĕтĕм чаплă пурнăçне тата хăйĕн мĕнпур вăйхалне халăх ырлăхĕшĕн панă ЯРОСЛАВСКИЙ юлташ вилни партие Совет Союзĕнчи ĕçсыннисемшĕн пысăк çухату пулса тăрать.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

ССР СОЮЗĔН ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕнчен

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ — Ленин-Сталин партийĕн чи ватă деятелĕ, ĕçсыннисен ĕçĕшĕн хăйĕн вăйне хĕрхенмесĕр кĕрешнĕскер, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ Емельян Михайлович ЯРОСЛАВСКИЙ юлташ вилни çинчен тарăнăн хурланса пĕлтерет.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ПРЕЗИДИУМĔ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем ГОМЕЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çаплах малалла тапăнса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче ШАПЧИЦЫ, БОВСК, СВЕРЖЕНЬ, МАЛАШКОВИЧИ, БОВЦИ, КРАСНИЦА, КАМЕНКА РЫСКОВСКАЯ, ФУНДАМЕНКА, НАДЕЖДИНО, ХИМЫ, СТОЛПНЯ, УГЛЫ, БУДА ЛЫШЕВСКАЯ, НОВАЯ СЛОБОДА, СТАРАЯ РУДНЯ, ПИРЕВИЧИ, КРУГОВЕЦ, РУБЕНКА, СКЕПНЯ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата САЛТАНОВКА ятлă чугун çул станцине.

ЧЕРКАССЫ районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем вăйлăн çапăçнă хыççăн Кировоград облаçĕнчи район центрне — НОВО-ГЕОРГИЕВСК хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата СТАРО-ЛИПОВО, НОВО-ЛИПОВО, КЛОЧКОВО, КАЛАБОРОК, БАБИНОВКА, ЧЕРНИКОВКА, НИКОЛЬСК, ФЕДОРКИ, НОВО-ФИЛИППОВКА ятлă ялсене тата КОРИСТОВКА ятлă чугун çул станцине йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 17 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен артиллери тăшманăн 20 самолетне персе ÿкернĕ

☆ ☆ ☆

Гомель хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ. Гомельпе Жлобин хушшинче, чугун çул тăрăх малалла куçса пырса, пирĕн боецсем Салтановка станцине тытса илнĕ. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан тăшман пысăк çухатусем тÿсет. Пĕр районра нимĕçсем малтанах туса хунă оборона позицийĕнче чарăнса тăма хăтланнă. Пĕр соединени чаçĕсем, ăнăçлă маневр туса, тăшмантан иртсе кайнă. Пирĕннисем çавăрса илессинчен хăраса, гитлеровецсем вара чакма тытăннă. Çав вăхăтра вĕсене пирĕн подразделенисем атакăланă. Нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ тата тăшманăн 8 танкне пĕтерсе тăкнă. 18 тупăпа пысăк калибрлă миномет, 3 боеприпас складĕ тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

Пирĕн боецсем нимĕçсем Германие каторгăна хăваласа каякан 10.000 совет гражданне ирĕке кăларнă.

* * *

Черкассы районĕнче нимĕçсем, юлашки çапăçусенче çухатнă позицийĕсене каялла илме хăтланса, атакăсем тунă. Пĕр участокра пирĕн çарсем тăшманăн 7 контратакине сирсе янă, гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра та нимĕçсем темиçе хут та атака тунă, анчах вĕсен атакисем пĕри те ăнман. Пирĕн артиллери нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Кременчуг хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн Днепр шывĕн сылтăм енчи оборонин питĕ кирлĕ узелĕ патĕнчи вырăна — Ново-Георгиевск хули патне пырса тухнă. Нимĕçсем кунта темĕн чухлĕ окопсемпе траншейăсем туса тултарнă, вĕсен умне минăсем лартса тухнă тата пралук карса тухнă. Çавсемпе пуринпе те усă курса, вĕсем вăйлăн хирĕç тăнă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем паян Кировоград облаçĕнчи район центрне — Ново-Георгиевск хулине тытса илнĕ. Хула урамĕсенче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Нимĕçсенчен 12 танк, тупăсемпе пулеметсем нумай, 5 апат-çимĕç складĕ тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра совет пехотинецĕсемпе танкисчĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, вăйлă çапăçнă хыççăн Користовка ятлă чугун çул узелне тытса илнĕ. Çав станцишĕн пынă çапăçусенче тăшмана уйрăмах пысăк çухату кÿнĕ.

* * *

Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ тăшманăн хуралта çÿрекен карапне, хăй тĕллĕн çÿрекен 2 десант баржине тата çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 2 баржине шыва путарнă.

* * *

Белосток облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Поезд ÿпĕнсе кайнă. Партизансем пулеметпа персе 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Белосток облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ пĕр чугун çул çинчи пысăк участокра рельссене сирпĕтсе янă. Ансăр чугун çул çинче совет патриочĕсем тăшманăн çар хатĕрĕсем турттарса пыракан поездне тытса

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

РУЗВЕЛЬТ, СТАЛИН ТАТА ЧЕРЧИЛЛЬ ТЕГЕРАН ХУЛИНЧЕ ТĔЛ ПУЛНИ

ТЕГЕРАН, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Тагеранра виçĕ союзлă державăн руководителĕсем—Рузвельт, Черчилль тата Сталин конференци туса ирттернĕ. Конференци ĕçĕсене дипломати тата çар представителĕсем хутшăннă. Конференцире Германие хирĕç пыракан вăрçă ĕçĕсене, çавăн пекех тата политикăллă чылай ыйтусене сÿтсе-явнă. Тивĕçлĕ решенисем йышăннă, вĕсене пичетлесе кăлараççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКИН ВĔÇĔ

илсе пĕтерсе тăкнă. Поезда сыхласа пыракан нимĕçсене тытакан илнĕ.

Нимĕçсен 355-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 866-мĕш гренадерски полкĕн тытăннă салтак Гейнц Кальмус çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ Россиăна килнĕ маршевăй батальона чиимĕçсен. 161-мĕш пехотнăй дивизине хушса панăччĕ. [illegible] ... 900 çынтан çурри те юлмарĕ. Октябрь уйăхĕнче 161-мĕш пехотнăй дивизин вырăсĕсем çĕмĕрсе тăкни малалла пулчĕ, унăн штабĕ Франци туха кайнă. Вара пирĕн батальона юлашкисене 355-мĕш пехотнăй дивизийĕн 866-мĕш гренадерски полкне парса пĕтерчĕç.

Октябрь уйăхĕнче 355-мĕш пехотнăй дивизийĕ 4 хутчен çынсем хушса пачĕç, çапах та ăна мĕн пурĕ 3.000 çынна çитиччен хăварнă. Анчах та унтан вара кунта кирлĕ вăхăт çитерсе пулман. Ку дивизисем те пысăк çухатусем тÿсрĕç. Фронта иккĕ уйăх пулнă хушăра пирĕн батальонра мĕн пурĕ те 40 çын кăна тăрса юлчĕ».

Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем гитлеровсем вăхăтлăха йышăнса илнĕ совет районĕсенчи мирлĕ халăха вăйпа Германие каторгăна хăваласа каяççĕ. Гитлеровсен, шерсе пăрахассине хăраса, çынсене çул çинче хĕнесе вĕлереççĕ. Ноябрь уйăхĕн 20-мĕш числинче Латви ССР-ĕнче Тилжа ялĕ çумĕпе совет гражданĕсен колонни иртсе пынă, унта 1.500 çынна çити пулнă. Çав çынсенчен пуместишĕ халран кайнипе малалла утма пултарайман. Хуралласа пыракан нимĕç салтакĕсем хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасене прикладсемпе çапса малалла хăваласа пынă. Чирленĕ тата вăйран кайнă çынсене фашистла пуçкасакансем çул çинчех пере-пере пăрахнă. Псков хули районĕнче, Крестовски лагерьте, Ленинград облаçĕн вăхăтлăха оккупациленĕ районĕсенчен нимĕçсем фашистла чуралăха хăваласа пыракан совет çыннисем темиçе пин çын пухăнса тăнă. Ентĕ пĕр уйăх ытла совет гражданĕсем, вăл шутра хĕрарăмсемпе пĕчĕк ачасем те, уçă пĕлĕт айĕнче пурăнаççĕ. Лагерьте сивĕпе, выçса тата чирлесе кунсерен темиçе вуншар çын вилет.

Тăван çĕршывалла

Харьковри Шевченко ячĕпе тăракан драма театрĕ Ферганăран тăван хулана таврăнать. Театрăн Ферганăран тухса каяс умĕн тунă вечерĕ украинецсемпе узбек халăхĕ пĕр-пĕрипе туслă çыхăнса тăнине кăтартса панă. (ТАСС)

ТАВА ТИВĔÇЛЕ ĔÇ

Ирĕклĕ ĕç. Çак шухăш çутă тĕнчере тахçан аваллах çуралнă. Ĕçлев правине илесси çинчен ĕçсыннисем нумай ĕмĕтленнĕ. Вăл ĕмĕтсем пирвайхи хут пирĕн çĕршывра, 1917 çулта Октябрьти социализмла аслă революци çĕнтерсе хыççăн, пурнăçа кĕчĕç.

Ирĕклĕ ĕç — пирĕн çĕршывăн халăхĕсен пуянлăхĕ. [illegible] Сталинла Конституци çине çырса хунă. Совет ĕçсыннисем мирлĕ строительство çулĕсенче хăйсен ирĕклĕ ĕçĕпе çĕршыв сăнне улăштарчĕç. [illegible]

Пирĕн ирĕклĕ ĕçĕн пархатарлă çимĕçĕсене фашистсем вăрçăра çапма, пирĕн ирĕклĕ çĕршыва пĕтерме пуçласан вара ытларах та курăнса кайрĕ. Хамăрăн тăван ялсене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕклĕ тăвассишĕн пин-пин ĕçсыннисем [illegible] çĕнтерÿшĕн çапăçаççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра слесарьсем пулса çеклет Анна Артемьевăпа Нина Иванова слесарьсем [illegible] Николай Иванович Офицеров [illegible] 10 уйăх хушшинче тăватă çулхи плана туртараймĕн. Асянина юлташ, [illegible] пĕтернĕ.

Хĕрелсе, шуралса шуçăм килнĕ чух пирĕн паттăр боецсем хĕватлă «ура» кăшкăрса малалла, хĕвеллĕ хамăр тăван ялсене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕклĕ тăвассишĕн ирĕклĕ ĕçсыннисене [illegible] çĕршыва сыхлама улăпла паттăрлăх парнелесе ĕçлеççĕ. Ирĕклĕ ĕç — ирĕклĕ çынсен ĕçĕ. [illegible] çĕршыва салам [illegible] паттăрĕсене.

Хĕвел тÿпене улăхнă чух пирĕн хăюллă воинсем темиçе хула илеççĕ. Сирĕн ĕç те пур çавăнта, совет ĕçсыннисем. Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисем Розов, Фарсов, Марунов, Соколов юлташсем

Хĕрлĕ Çар Гомель хулине илнĕ вăхăтра [illegible] 2328 килограмм тол[illegible] пурнăçлаççĕ.

Кăçал кĕлем килнĕ чух пирĕн мухтавлă воинсем Кăнаш тата вăрманĕсем [illegible] Алексей Закаляпин [illegible]

Пирĕн танксем фашистла вăрăхусене [illegible] «Катюша» [illegible] Сталинла Конституцин пахă тăтăр пĕтерет. [illegible] (СТАЛИН).

Вăрçă пĕтĕ. Совет халăхĕ тăван çĕршыва сыхласа фронтран таврăннă хăйĕн паттăр та мухтавлă ывăлхĕрĕсене чыслĕ, çавăн чухне рабочи класс та халăхсен аслă кĕрекинче пулĕ.

М. ТИТОВ.

Сталинла Конституци хÿттинче

Совет Союзĕнчи çынсем ватăлсан е ĕçлеймен пулсан, Сталинла Конституци тăрăх вĕсене государство пулăшса тăрать. Отечественнăй вăрçă фронтĕнчен аманса килнĕ пирĕн ĕçлеме пултараймин çынсене государство уйрăмах тимлĕн пăхать, вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма тăрăшать.

Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пирĕн республика Наркомсобесĕ çак çулта 10 уйăх хушшинче 119.000 тенкĕ укçа пулăшу панă. [illegible]

Вăрçăран аманса килсен Молотов юлташ утма та пултараймаĕн. [illegible]

Вăрçă инвалидĕсене пулăшнă вăхăтра [illegible] 58.522 тенкĕ укçа, 17.800 тенкĕлĕх продовольстви панă.

Советски районри «Заря» колхоз [illegible] кĕрсе пыраççĕ.

Кун пек тĕслĕхсене нумай илсе кăтартма пулать. Çакăн пек тăрăшать ĕнтĕ пирĕн государство çынсемшĕн. Çакăн пек тăрăшма кирли çинчен çырса хунă ĕнтĕ Сталинла Конституцире.

Н. МОИСЕЕВ,

ЧАССР Социальнăй обеспечени халăх комиссарĕн заместителĕ.

Художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленеççĕ

КАЛИНИНО. Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхозра композитор Сидор Слонов юлташ ертсе пынипе 20 комсомолецран хор кружокĕ организациленĕ. Кружок членĕсем халĕ художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленеççĕ. Вĕсем 7—8 юрă юрлама вĕренчĕç те ĕнтĕ. Калинин тата Пушкин ячĕсемпе тăракан колхозсенче темиçе хутчен те концертсем туса ирттерчĕç.

Комсомолецсен йышĕ ÿсет

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа Шăхасан районĕнче 615 çамрăк комсомол ретне кĕнĕ. Кăçалхи иртнĕ 10 уйăх хушшинче комсомол ретне 337 çамрăк хутшăннă.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: декабрĕн 1-мĕшĕ ырăн тенĕ чух çĕрле союзниксен эсминецĕсем Албани Адриатика тинĕс хĕрринчи Дураццо хулине пенĕ. Хулара вăйлă пушар тухнă. Тăшманăн çыранри батарейĕсем хирĕç пенĕ, анчах тĕл переймен.

Итали (Адриатика тинĕс хĕрринчи) районĕнче союзниксен çарĕсем Сан Вито Киетино еннелле малалла кусна. Тăшман малтанах хатĕрленĕ позицисене вăйлă хирĕç тăнине тата контратакăсем тунине пăхмасăрах, союзниксен çарĕсем Кастель-Френтано ялĕ пунктне йышăнса илнĕ. Америкăн 5-мĕш армийĕн участокĕнче пĕр районра малалла кусна.

ИТАЛИ ТĔЛĔШПЕ ТУНĂ КОНСУЛЬТАЦИ СОВЕЧĔН ПЕРРЕМĔШ ЛАРĂВĔ

АЛЖИР, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). (Вăхăтра çитермен). Енер Итали тĕлĕшпе тунă Консультаци совечĕн пĕррмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Вăл ларура пурничен ытла организаци ыйтăвĕсене сÿтсе-явнă. Ларура штаб начальникĕ Эйзенхауэр генерал, Смит генерал-майор тата Холмс генерал Италири лару-тăру çинчен халаса панă.

Совечĕн пĕррмĕш ларăвĕнче Франци халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн представителĕ Рене Массигли председатель пулнă. Малашне Итали тĕлĕшпе тунă Консультаци совечĕн ларăвĕсене СССР представителĕ А. Я. Вышинский, Великобританин представителĕ Гарольд Макмиллан, США представителĕ Роберт Мэрфи тата Франци халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн представителĕ Рене Массигли черетпе председатель пулаççĕ.

ФРАНЦИРЕ ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇ САТАРЛА ĔÇСЕМ ТĂВАÇÇĔ

РАБАТ, декабрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рабатри радио çапла пĕлтерет: Монбельяр хулинче (Ду департаментĕнче) франци патриочĕсем çак кунсенче Германи валли ĕçлесе тăракан завода ирăхăсра кăларнă. Çав хулара халь оккупантсем тытса илнĕ апатчĕмĕс склачĕсене вут тĕртсе çунтарса янă. Швейцари чикки çывăхĕнчи Бельфор хулинчи предприятисене гитлеровецсем ĕç кунне çĕнĕрен тăсна пулин те, продукци туса кăларасси чакса пырать. Çакă вăл рабочисем нимĕçсем валли ĕçлесшĕн пулманнине кăтартать. Гестапо çав предприятисене оккупантсемшĕн ĕçлесе тăракан франци шпионĕсене янă. Анчах ун çинчен рабочисем пĕлсе те, гестапо агенчĕсем вара часах хăйсене ĕçлесе хăварнă. [illegible]

ДАНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Дагенс нюхетер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 28-мĕшĕнче Хеллерупри «Индустрисиндикат» мастерскойне сирпĕнтерсе янă. Çак мастерской Дани хĕçпăшалсем тăвакан завод пысăк мастерской пулса тăрать. Ноябрĕн 27-мĕшĕнче Копенгагенра Германин тинĕс-çар флочĕн тĕрлĕ материалĕсене хунă вырăнсене вут тĕртсе, çунтарса янă. «Свенска дагбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн кĕске вăхăтра Дани çыннисем çалтаксем хушшинче темиçе тытăçу пулса иртнĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви кăнтăр Ютландин хĕвелтухăç пайĕнче çĕнĕрен диверсилле ĕçсем туни çинчен пĕлтерет. Унта чугун çула пасна тата пилĕк станцире складсене сирпĕнтерсе янă.

ХАРСĂР ĂМĂРТКАЙĂК

Чăваш халăх паттăрне—
Совет Союзĕн Геройне
Ф. Н. Орлов капитана

Ял-ял урлă, хула урлă,
Ту, вăрман, уй урлă
Вĕçет пирĕн ăмăрткайăк
Ывăнми, хăюллă.

Вĕçет шур пĕлĕтпе тан ва,
Е унтан та çÿллĕ;
Вĕçет вутлă çумăр витер,
Çăмăл мар ун çулĕ.

Çиле хирĕç, çиле майăн
Варкăшать çуначĕ.
Тăшмана курать тастан вăл,
Куçĕсем çунаççĕ.

Ун çинчен юрлаççĕ юрă,
Халлаплаççĕ шухă:
Ана сăнă тивмест, теççĕ,
Тивмест, теççĕ, ухă.

Аçа çиçĕм пек кумать вăл
Тăшман пуçĕ çинĕн,
Аçа чулĕ пек анать вăл
Хар-хаяррăн, çиллĕн.

Каçару мĕнне пĕлмест вăл,
Тавăру! — тет юнĕ.
Парăну мĕнне пĕлмест вăл
Çĕнтерÿ ун кунĕ.

Йăвăрри те уншăн çăмăл,
Аякри те çывăх.
Тавтăвать ăна çĕршывăм
Сунать ырлăх-сывлăх.

Тавтăвать ăна пур халăх:
— Тайма пуçăм, тайăн...
Сывă пултăр, сывă пултăр
Харсăр Ăмăрткайăк!

П. ХУЗАНГАЙ

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

Укерчĕк çинче: Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри рационализатор-инвалид Н. Е. Егоров юлташ. Уйхирте ĕçлеме пултараймасть вăл, анчах çак йывăр вăхăтра фронтпа çĕршыва мĕнле те пулин пулăшас кăмăлпа пурăнать. Тырпулсене уйхиртен аnaçлăн пухса кĕртме колхоза пулăшас тесе, вăл машина çĕççисем хăйрама, çава-çурласем туптама çил пăйĕпе ĕçлекен токарнăй станок тунă. Çил вăйĕпех вăл жнейка кĕрэплисем, хурт-хăмăр вĕллисем тăвать.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

☐ **Ирĕке кăларнă районсене пулăшма.** Пирĕн республикăри колхозсемпе промышленность работникĕсем нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене тăванла пулăшаççĕ. Ку таранччен пирĕн колхозсем Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă районсене 3050 сурăх, 2500 сысна янă, вĕсене валли татах 5000 пуç выльăх чĕрлĕх, 200 пуç кайăк-кĕшĕк пăхса ÿстереççĕ. Вăрман хатĕрлекен предприятисем юлашки икĕ уйăх хушшинче 200 вагон ытла йывăç тиесе янă тата Донбасри предприятисене пама йывăç материалĕсем 139 вагонлăх хатĕрленĕ.

☐ **Çĕнĕ производствăсем.** Йĕпреçри „Красный строитель" промысла артелĕнче çĕнĕрен спичка тата урапа-çуна тăвакан производствăсем организациленĕ. Вĕсем продукци кăларма тытăннă. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра куллен кирлĕ таварсем тăвакан цех уçнă. Вăл çатмасем, тÿмесем тата ытти йышши чылай япаласем туса кăларать.

☐ **Рационализацилле сĕнÿсем.** Канашри вагонсем юсакан заводри рабочисемпе инженерла-техникла работникĕсем ĕçе организациленине пăхса тухнă вăхăтра 336 сĕнÿ панă. Вĕсенчен 9-шне пурнăçа кĕртнĕ те ĕнтĕ. Пухнă рационализацилле сĕнÿсем, çулталăкра 326.000 тенкĕ укçа перекетлеме май параççĕ.

☐ **Вулав çурчĕсен заведующийĕсен вĕренĕвĕ.** ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕн парткабинечĕ вулав çурчĕсен заведующийĕсен семинарне ирттернĕ. Семинарта политика ыйтăвĕсемпе лекцисем туса панă, вулав çурчĕсенче культурăллă-массăллă ĕçе мĕнле йĕркелесе пымалли тата ытти ыйтусене сÿтсе-явнă. Семинара пухăннисене лайăх ĕçлекен вулав çурчĕсен ĕçĕпе паллаштарнă.

☐ **Тупăшлă утар.** Элĕк районĕнчи „Звезда" колхоз кăçал хăйĕн утарĕнчи вĕллесенчен кашнинчен 40 килограмм, çапла пĕтĕмпе 1536 килограмм пыл илнĕ. Утарта пчеловод пулса колхозник И. Пупин юлташ ĕçлет.

☐ **Стена хаçачĕсен ăмăртăвĕ.** Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра цехсенчи стена хаçачĕсен социализмла ăмăртăвне организациленĕ. Ăмăртăва пур цехсемпе отделсенчи хаçатсем те хутшăннă. Ăмăртура мала тухакансене премилеме виçĕ преми уйрнă.

☐ **Çĕнĕ кадрсем.** Шупашкарти ялхуçалăх институчĕн зоотехника факультечĕнчи 5-мĕш курсра вĕренекенсем государственнăй экзамен тытрĕç. Экзамен тытаканĕсенчен 90 проценчĕ „отлично" тата „хорошо" паллăсем илчĕç, начар паллăсем илнисем пачах та пулман. Вĕренсе тухнисенчен чылайĕшĕ ирĕке кăларнă районсене каяççĕ, ыттисем хамăр республикăра ĕçлеме юлаççĕ.

Ухлать те улать аслă Днепр

Ухлать те улать аслă Днепр,
Хаяр та вăйлă çил вĕрет.
Т. ШЕВЧЕНКО.

Ухлать те улать аслă Днепр. Унăн урлă пирĕн гаубицăсен йĕтрисем, сывлăша çурса, тăшмансен пуçĕсем çине кайса ÿкеççĕ. Аслă Днепр çине тăшман йĕтрисем киле-киле ÿксе, таса шыва кунран-кунах çĕклеççĕ.

Аслă Днепр урлă каçиччен манăн, рядовой салтакăн, икĕ çул хушшинче вăрçă çулĕсемпе вăрçă хирĕсем тăрăх нумай çÿреме тиврĕ. Эпĕ, вăрçă çынни, вăрçă пуçламĕшĕпе хальхи вăхăта танлаштарса пăхатăп та, вĕсенче ытла та пысăк уйрăмлăхсем куратăп.

Ун чухне эпир чакаттăмăр. Тăшман алли[illegible] ырлăх-пурлăх тăрса юлатчĕ. Чăтлăх сатсем варринче ларакан Украина салисем. Ылттăн тулăпа тинĕс пек хумханса выртакан Дон таврашĕнчи уйхирсем. Çĕркаçрăкĕпе сывлаçа выртакан Донбасс. Хамăрăн хаклă çемьемĕрсем, тăванăмăрсем. Ашă кăмăллă вырăс хĕрарăмĕсем.

Дон çинчи казачкăсене, çемçе кăмăллă украинкăсене эпĕ хам çĕре кĕриччен те манас çук. Вĕсем пире часрах каялла таврăнма тархаслярĕç, амăшĕ ывăлне ăсатнă пек хурлянса ăсатрĕç. Вĕсем пире шыв вырăнне ăшă сĕт [illegible] ĕçтерчĕç, çĕрулми вырăнне çăмарта çитерчĕç, тăван вырăс хĕрарăмĕсем!

Эпир чакрăмăр. Атăл çине тухиччен чакрăмăр. Макăра-макăра, шăла çыртса чакрăмăр.

Эсĕ, вулакан, тыл çынни вулсан, тăван çĕршыва тăшман аллине хăварса кулленкун каялла чакса пыма пире мĕн тери йывăр пулнине пĕлнĕши ун чухне? Эсĕ эпир кашни хулана хăварнă хыççăн пире вăрçнă пулĕ. «Мĕн таранччен чакма пулатьха капла», — тенĕ пуль. Эпир те, фронтовиксем, туйнă ăна. Эпир те сан шухăшупа килĕшнĕ.

Анчах эпир чакнă. Мĕншĕн тесен пирĕн ун чухне техника çителĕксĕртерех пулнă. Эсĕ, тыл çынни, çак техникăна пирĕн валли çителĕклĕ таранах туса париччен, эпир Атăл хĕррине çитиччен чакрăмăр. Анчах кунта, аслă вырăс халăхĕн аслă юханшывĕ çинче, эпир сирĕнпе, тыл çынни, пĕтĕм вăя хутăмăр. Эсĕ кунта пире мĕн кирлине йăлтах патăн. Эпир вара хамăра хĕрхенмесĕр çапăçрăмăр. Аслă Атăл çинче тăшмана çапса салатрăмăр. Çакăнтан вара пирĕн чап, çĕнтерÿ çулĕ пуçланса кайрĕ!

Унтанпа эпир куллен-кун малалла каятпăр. Фронтри ĕçсем тĕпрен улшăнчĕç. Тăшманшăн йывăр кунсем çитрĕç. Вăл халĕ пире хирĕç кĕрешме хăйĕн пĕтĕм вăйне, ăс-хакăлне пухать. Пире хирĕç «тигр» текен танксем ярать. Эпир вĕсене пĕтермелли мелсем шухăшласа кăларатпăр. Вăл пире хирĕç «фердинанд» текен хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем шухăшласа кăларать. Эпир вĕсене пĕтермелли мелсем шухăшласа кăларатпăр. Вăл пирĕн танксене пĕтермелли торпеда-танкетка е «телетанк» текен пĕчĕк танксем шухăшласа кăларчĕ. Эпир вĕсене пĕтермелли мелсем шухăшласа кăлартăмăр, халĕ кашни кун вĕсене пĕтере-пĕтере пыратпăр.

Ас-хакăл çинчен каласма пуçтарăмăр пулсан, каласах пĕтерер. Вырăс ăс-хакăлĕ аслă рах. Эпир нимĕç шухăшласа кăларнă техникăпа кĕрешмелли мелсем кăна мар, хамăр та çĕнĕ техника шухăшласа кăларатпăр. Пирĕн «Катюша» текен хĕçпăшал пекки тăшманăн çук. Пирĕн «Андрюша» текен хĕçпăшал пекки тăшманăн çук. Унашкал орудисем шухăшласа кăларма пултараймасть каппайчăк нимĕç. Пирĕн «Катюшăсемпе» «Андрюшăсем» ай-ай хытă ăшалантараççĕ тăшмана. Вăрçă пуçламĕшĕнче çĕр айне эпир пытанаттăмăр, халь тăшман çĕр айне мар, çĕр тĕпне пытанать пирĕн—«катюшăсенчен»! Вăрçă пуçламĕшĕнче нимĕçсем оборона тунă чухне маскировка мĕнне те пĕлмен. Халь вĕсен окопĕсене, блиндажĕсене пăхатăн та тĕлĕнсе каятăн: çав тери тĕплĕ тăваççĕ халь вĕсем маскировкăна.

Нимĕçе йывăр. Эпир унăн юлашки шанчăкне çĕмĕртĕмĕр—Днепр урлă каçрăмăр. Малалла мĕн çине шанма пултарать тăшман?..

Тăшманăн шанчăкĕсем пĕтрĕç, пурнăçĕ кĕскелчĕ. Халь вăл урса кайнă пекех хăтланать. Кăçалхи çулла эпир Белгород енче тăшманăн оборонине татса, хаклă Украина çĕршывĕ çине кĕрсе кайрăмăр. Эпир Харьков Полтава облаçĕсем тăрăх Днепр урлă каçса кайрăмăр. Мĕн куртăмăр эпир ку облаçсенче? Унти ялсем вырăнĕсенче кĕл те кăмрăк. Çĕрĕн-кунĕн çунчĕç унти ялсем. Эпир пырса кĕнĕ çĕре унти ялсенче пĕр кил-çурт та юлман. Хирсенче пĕр кĕлте çук. Йăлтах чĕртсе çунтарса янă. Вăрăм çулсем тăрăх выльăх виллисем шутсăр нумай сапаланса выртаççĕ. Ирсĕр тăшман кашни çурта, кашни кĕлтене уйрăмăн чĕрре-чĕрре çунтарса тухнă, кашни выльăха уйрăмăн кĕрсе вĕлерсе хăварнă. Эпир иртнĕ çул çинче яла кĕрсен çăмăртан-сивĕрен хÿтлĕх пулмарĕ, хирсенче ая сарма пĕр кĕлте улăм тупăнмарĕ.

Тăшман: «Ку пуянлăх мана пулмарĕ пулсан сире те ан пултăр», — терĕ пулас. Мĕнех вара, пирĕн салтак чăтăмлă! Эпир малаллах çĕмĕрсе пытăмăр. Пире тăшмана тавăрас ĕмĕт ăшăтать çеç мар, вĕрилентерсе тăрать, малалла туртать.

Çапла. Эпир хамăр тăван ял-хуласене тăшманран çăлса, ирĕке кăларса пыратпăр. Хамăрăн хаклă тăванăмăрсене, çемьесене курасшăн çунатпăр. Анчах пире хирĕç нÿхрепсенчен, тахçан-авал упасем пурăннă варсенчен суккăр стариксем, путăк хура куçлă, çара уран та йÿле пилĕк выçă хĕрарăмсем çарапакка ачисене çавăтса тухаççĕ. Еçе пултаракан пĕтĕм çамрăксене тăшман хăй çĕршывне каторгăна илсе кайнă. Тăшман çакăн пек ирсĕр хăтланса пирĕн вăя иксĕлтересшĕн пулчĕ. Анчах ку тепĕр майлă çаврăнса тухать. Унăн ирсĕр ĕçĕсене куран та, чĕре вăркать, ăш çунать, сывлăш пÿленет. Тавăрас килет.

Халĕ эпир малалла каятпăр. Тăшман пире переправăсенче чарса лартас тесе пĕтĕм вăйне хучĕ. Çавăнпа ухларĕ те уларĕ аслă Днепр. Анчах Украина аслă юхан шывĕ çинче, аслă украинец Тарас Шевченко юратнă юханшывĕ çинче, аслă Тарасăн:

«Тăшмансенĕн юнĕпеле
Ирĕкĕре çăвăр!» —

тенĕ сасси татах та хытăрах янраса тăрать. Вăл сасă пире малалла йыхăрать, вăл сасă пире тăшмана тавăрма чĕнет, вăл сасă пире çĕнĕ вăй-хал парать.

Рядовой В. АХТУБАЙ.

Днепр леш енĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

декабрĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

„КОМСОМОЛЬЦЫ"

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ
16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

„МЕЧТА"

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Шупашкар пристанĕ пур организацисемпе учрежденисене те çакăн çинчен пĕлтерет: 1943-мĕш çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944-мĕш çулхи февралĕн 1-мĕшне çитиччен Шупашкар пристанĕ 1944-мĕш çулхи навигацире Атăл бассейнинчи пур тырсем тăрăх та грузсем турттарса пама тата буксирпа сулăсем турттарма договорсем тăвать. Грузсене хăвăрт çÿрекен пăрахутсемпе те тата хуллен çÿрекен пăрахутсемпе те яма юрать.

Шупашкар пристанĕ.

Чебторга ÇĂМАТА ÇАПАКАНСЕМ КИРЛĔ. Ĕç укçи каласса таталнă тăрăх.
Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, Чебторг.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăран — 0—67, секретарьне заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.

НТ 1880